## Ҫӗнӗ директор пирӗн пурнӑҫа интереслӗрех тӑвать

**Мероприяти - ачасем хӑйсен пултаруллӑхӗсене паллаштарни, чӗлхене аталантарни, ҫынсем умне тухма вӑтанманни теме те юрӗ пуле.**

Пирӗн шкулта ҫулталӑк каялла ҫӗнӗ директора суйларӗҫ. Вӑл питӗ пултаруллӑ та хастар ҫын. Директор, Юрий Алексеевич, ачасене питӗ юратать, вӗсене яланах пулӑшать. Ачасене аталантарас енӗпе тӗрлӗрен мероприятисем ирттерет. Шкулта халӗ интереслӗ кружоксем нумайланчӗҫ. Пӗлтӗр шкула ҫӗнӗ компьютерсем илсе килчӗҫ. Халӗ шкулта «Юный программист» кружок аталанса кайрӗ. Ачасем унта хаваспах ҫӳреҫҫӗ. Спорт енӗпе те шкул малалла кусса пырать. А.П. Давыдов пирӗн шкул ачисем валли мечӗксем парнелерӗ. Шкулта спортменсен секцийӗ йӗркеленчӗ.

Нумаях пулмасть пирӗн шкулта аслӑ классен хушшинче КВН пулса иртрӗ. Кӗҫӗнрехисем хушшинче те халӗ «математика — царица наук», «Юный математик» — конкурсем пыраҫҫӗ. Пӗчӗккисем те, аслӑраххисем те савӑнсах хутшӑнаҫҫӗ, нимрен те хӑрамаҫҫӗ.

Часах Ҫӗнӗ ҫул ҫывхарса ҫитет. Шкул ачисем хушшинче тӗрлӗ конкурссем иртеҫҫӗ: «Чи хитре класс», «Чи пултаруллӑ Хӗл Мучипе Юр Пике», «Чи пултаруллӑ класс». Ҫак мероприятисем малалла та вӑйлӑрах аталанса пырасса шанатпӑр.

**Валя СТЕПАНОВА тата Света МИХАЙЛОВА,**
**10 кл.,Турай шкулӗ**

## Шкул хыпарӗсем.

**Раштавӑн 29-мӗшӗнче Калайкасси шкулӗнче Ҫӗнӗ ҫул уявӗ пулать.**

Ҫак куна пӗтӗм шкул ачи кӗтет. Вӗсем юратнӑ учительсем, хӑйсен юлташӗсем, тӑвансем валли савӑнсах парнесем хатӗрлеҫҫӗ. Шкула Шупашкартан пукане театрӗн артисчӗсем килеҫҫӗ. Ҫак артистсене курма пирӗн шкул ачисем анчах мар, Кадикасси садикӗнчен те, Шатракасси шкулӗнче вӗренекен ачасем килеҫҫӗ.

Эпӗ сире Ҫӗне ҫула лайӑх ирттерме сунатӑп, учительсене ан хурлантарӑр. Туссене саламлама ан манӑр!

**Анастасия ИВАНОВА,**
**Калайкасси шулӗ, 8 «Б» класс.**

## Чи пултаруллӑ ача

***Юпа уйӑх вӗҫӗнче,***
***Ҫирӗм улттӑмӗшӗнче***
***Кам ҫуралнӑ ҫӗр ҫинче?***



Хуравне пӗлес килет-и? Апла пулсан пирӗн статьяна вуламасӑр ан хӑварӑр. Малалла сӑмах Шурча шкулӗнче 8-мӗш класра вӗренекен пултаруллӑ пике ҫинчен пырӗ.Паллашӑр: пирӗн Иринӑпа!

**-Эсӗ миҫе ҫулта?**

-Эпӗ 14 ҫулта.

**-Эсӗ ӑҫта ҫуралнӑ?**

-Эпӗ Муркаш р-чи Шурча ялӗнче ҫуралнӑ.

**-Санӑн юратнӑ апат-ҫимӗҫ?**

- Чи юратни — апат яшки.

**-Санӑн юратнӑ тӗс?**

-Чи юратни — хӗрлӗ.

**-Килӗштернӗ урок хӑшӗ вара?**

-Чӑваш чӗлхи урокӗ.

Эпир Иринӑпа ялан мухтанатпӑр,телей, ӑнӑҫу ӑна сунатпӑр.

**Надежда ТРОФИМОВА ,**
**Шурча шкулӗ, 8 класс**

## Чӑваш хаҫачӗ, чӑваш чӗлхине упраса хӑварма питӗ пулӑшать



Чӑвашсен пӗрремӗш хаҫачӗ «Хыпар» чӑвашсене аталантарма пулӑшать. Пӗтӗм чӑваш литератури «Хыпар» хаҫатпа пӗрле аталанма пуҫланнӑ. Шкул ачасем валли ҫыракансем — «Хыҫалти парта» пӗрремӗш хаҫат. Ҫавӑнпа та ачасем ӑна хавас тусах вулаҫҫӗ. Ҫак хаҫат учителсене те, ашшӗ- амӑшӗсене те кирлӗ. Мӗншӗн тесен вӗсен ачасемпе ҫывӑх пулмалла, вӗсен чун-шухӑшне пӗлмелле, ӗмӗчӗсене ӑнланмалла. «Эпир аслисем, ҫакна самантрах манма пултарайратпӑр. «Хыҫалти парта» пире ҫакна аса илтерсех тӑрать. Редакци коллективне хаҫат кӑларассине малалла та туса пама ыйтас килет. Турӑ пулӑштӑр сире!» - каларӗ чӑваш халӑх ӑсчахӗ Е.Е.Ерагин.

**Анастасия ИВАНОВА,**
**Калайкасси шкулӗ ,**
**8 «Б» класс**

## ЧИ ЛАЙӐХ ҪЕМЬЕ

**Раштавӑн 22-мӗшӗнче Атапай шкулӗнче «Ҫулталӑк семьи» конкурс иртрӗ.**



Унта тӑватӑ ҫемье хутшӑнчӗ. Вӗсем Багровсем, Кирилловсем, Михайловсем тата Быковсем. Мӗн кӑна сцена ҫинче тумарӗҫ пуль? Кам ташлать, кам юрлать, кам йӗплесе те шӳтлесе калать. Тутлӑ ҫимӗҫ пӗҫерет. Вӗсем пурте маттурсем пулчӗҫ, жюрисем конкурса хутшӑнакансене сӑнаса савӑнчӗҫ. Анчах та чи маттуррисем Багровсен ҫемьи пулчӗ. Иккӗмӗш вырӑна Быковсен ҫемьи тивӗҫрӗ. Виҫҫӗмӗшне вара икӗ ҫемье ҫӗнсе илчӗҫ — Кирилловсемпе Михайловсен ҫемьисем.

**Алена БЛИНОВА**
**Атапай шкулӗ, 7 класс**

## Ҫамрӑк физик

**Кашни шкулта та пултаруллӑ та маттур ачасем пур. Пирӗн шкулта Багров Александр вӗсен шутне кӗрет. Вӑл питӗ лайӑх вӗренет, тӗрлӗ конкурссене те хутшӑнма тӑрӑшать.**

Раштав уйӑхӗн 23-мӗшӗнче вӑл физика олимпиадине кайса пӗрремӗш вырӑн йышӑнса килчӗ. Унпа пӗрле физикӑпа алгебра вӗрентекен Скворцов Юрий Георгиевич кайрӗ. Ытти ӗҫсене те тума пултарать Саша. Ытларах вӑл алгебрӑпа физикӑна кӑмӑллать.

Унсӑр пуҫне пирӗн шкулта фольклор кружокӗ пур. Ӑна Анисимов Геннадий Иванович ертсе пырать. Ҫав кружокра юрлаҫҫӗ, купӑспа калама вӗренеҫҫӗ.

Эпӗ хам та ҫав кружока ҫӳретӗп.

**Елена КОЛБАСОВА**
**7 класс, Атапай шкулӗ,**

Шатракасси пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан тӗп шкул вӗренекенӗсене, вӗрентекенӗсене Ҫӗнӗ Ҫул ячӗпе саламлатпӑр. Ырлӑх-сывлӑх, телей, ӑнӑҫу, ҫирӗп сывлӑх сунатпӑр. Пурнӑҫ такӑр пултӑр. Ҫак Ҫӗнӗ Ҫулта ӗмӗтсем пурнӑҫланса пыччӑр. Сысна ҫулӗ сире телей илсе килтӗр.

Салампа Шатракасси шкулӗнче вӗренекенсем Ильина К. тата Гусева Т.